Элкер С. «Нарспи» авторне асăнса: [сăвă] / С. Элкер // Сунтал. – 1926. - № 2. – С.16.

# „Нарспи“ автӑрне асӑнса.

Вӑл, ҫурхи йур айĕнђен
Пĕђђен тухнӑ ђеђек пек,
Ирхи шуҫӑм умĕнђен
Хӑпаракан ҫӑлтӑр пек,—
Пĕтĕм ђӑваш ҫĕршывне
Ҫурхи илем кĕређђен,
Ун йалĕсем ҫинелле
Хĕвел ҫутти ўкеђђен,—
Ђуралӑхри ђĕлхене
Шанђӑк пама курӑннӑ,
Тухас сӑвӑҫ туссене
Ҫул кӑтартма пуҫӑннӑ

* * *

Тӑван ђĕлхен сухине
Кўлĕннĕ вӑл хӑйне хӑй,
Ĕҫин пулас уссине
Хыт ĕненсе хунӑ вӑй.
Анђах... ӑна хĕсепсĕр
Сĕмсĕр вилĕм хупларĕ;
Ҫавах та вӑл пире пĕр
Пысӑк шанђӑк кӑтартрĕ.

Елкер.